Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX

54 (7796) № ✻ Юн кун, 2010 ҫулхи утă (июль) уйăхĕн 14-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Малашлăх – ҫамрăксенче



*Кирек епле коллективăн пуласлăхĕ те йышра ҫамрăксем пурринче. Сăн ӳкерчĕкре эсир Муркашри тĕп больницăри ҫамрăк хастар специалистсене куратăр. Медицина ĕҫĕнче пуян опыт пухнисем хăйсен ăсталăхĕпе шăпах ҫамрăксене паллаштарса пыраççĕ те. «Ҫамрăк чĕресем» канаша пĕрлешнĕскерсем вара хăйсен тивĕçне туллин пурнăçланипе пĕрлех обществăлла ĕçре те активлă.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ҫивĕч лару-тăру

## Пурнăç кашнин пĕрре кăна

Питĕ шăрăх та ҫумăрсăр ҫанталăка пула районта лару-тăру ҫивĕч тăрать.

2010 ҫулхи пушар тухас хăрушлă тапхăр пуçланнăранпа Атăлçи федераллă округра пĕтĕмĕшле лару-тăру йывăр. Акă Чăваш Республикинче 704 пушар тухнă. Тăкакĕ вара питĕ пысăк – 35,5 миллион тенкĕ. Ҫулăмра 60 ҫын ҫунса кайнă, вĕсен шутĕнче 2 ача. Муркаш районĕнче 23 пушар пулчĕ (пĕлтĕр – 21), пушарта 1 ҫыннăн пурнăçĕ татăлчĕ.

Пушар тухассин тĕп сăлтавĕсем пирус туртнипе, ҫӳп-ҫап е типĕ курăк ҫунтарнă чух асăрханманнипе, электричество пралукĕсем юсавсăр пулнипе ҫыхăннă. Район территорийĕнче июнь-июль уйăхĕсенче тухнă пушарсен ҫурри шăпах электричество пралукĕсем юсавсăр, кивĕ пулнăран тухнă.

Кивĕ пралуксене ҫĕннипе улăштарма пĕтĕм хуҫалăха, пĕтĕм тупрана ҫĕнĕрен тăвассинчен темиçе хут йӳнĕрех ларать вĕт. Ҫакна темшĕн ҫынсем ăнланасшăн мар. Кайран вара чавса ҫывăх та...

Шăрăх, типĕ... Ҫак йывăр тапхăра чăтса ирттерме пурин те вăй-хал ҫитермелле. Каçхи-ҫĕрлехи вăхăтра «ĕлĕкхи» пек ял хуралĕсем туса хурассипе те ялсенчех тимлемелле. Районта 177 ял, кашни яла «ҫӳлтен» пырса ҫак ĕçе йĕркелесе парассине кĕтмелле мар. Пуçаруллă пулмалла. Ҫак ĕçе пурнăça кĕртсен хăш-пĕр инкеке ҫийĕнчех сирме те майсем ытларах пулаççĕ. Вăхăтра ҫынсене, пушар хуралçисене пĕлтерме пулать. Вăхăтра пĕлтерменрен ĕнтĕ пушар машинисем те ҫулăм хуҫалăхри ҫуртсене тĕп тусан тин ҫитеççĕ.

Паянхи тепĕр хăрушлăх вăл – шыв. Пĕр енчен вăл ҫитмест е пачах та ҫук. Пурте аптăраççĕ: ҫынсем те, чĕр чунсем те. Ял хуҫалăхĕнче лару-тăру питĕ йывăр: тĕрлĕ культурăсем, ҫĕр улми, ытти пахча ҫимĕç пĕтнĕрен выльăх-чĕрлĕх валли апат ҫителĕклĕ хатĕрлеме май килмест. Ҫăлсем типеççĕ, пĕвесенчи шыв та хухать. Ҫĕр айĕнчи шыва илме те кунсерен йывăрлансах пырать. Шыв вăл укçа, паян вара ылтăн вырăннех пулса тăчĕ. Паянхи лару-тăрура ĕçме те шывĕ аран-аран ҫитет пулсан, пăрăхпа пыракан шывпа пахча ҫимĕç (ҫĕр улми таранах!) шăварни питĕ тĕрĕс мар, вырăнлă мар. Ҫакна кашнин ăнланса илмелле. Шăварма пĕвери шыв та аван вĕт, ҫак ĕçре пурин те унпа усă курмалла.

Тепĕр енчен илсен. Шыв хĕрринче канасси ҫынсен йăлине ҫирĕпрех те ҫирĕпрех кĕрсе пырать. Шыв вара илемлипе пĕрлех тарăн та. Шыва кĕмелли тапхăр пуçланнăранпа районта 4 ҫын путса вилчĕ, вĕсенчен иккĕшĕ шыва кĕнĕ чух. Юлашки 5 ҫул хушшинче шывран 41 вилнĕ ҫын кĕлеткине кăларнă.

Хамăрăн пурнăçа сыхлас, ҫывăх ҫынсене хурлантарас мар тесен ҫак сĕнӳсене асра тытмалла:

- хĕвел ҫинче нумай вăхăт пулнă хыççăн шыва кĕмелле мар;
- эрех ĕçнĕ пулсан шыва кĕмелле мар;
- юнашар шыва кĕмелли ятарлă вырăн пулмасан шыв тĕпĕ таса тата ҫырантан вăраххăн тарăнланса пыракан вырăнсене суйламалла, шыва асăрханса утса кĕмелле;
- инçе ишсе каймалла мар, каялла килме вăй ҫитмесен те пултарать;
- шыв юххи тĕлне лекрĕр пулсан, ăна хирĕç ишмелле мар, ăна майлă майĕпен ҫыран еннелле пăрăнса пымалла.

**Н. МИЛЮТИН,**
**район администрацийĕн ГО тата ЧС уйрăмĕн ертӳçи.**

## Ҫул ҫинче – патруль!

Кăçалхи ҫу кунĕсем ытла та шăрăх пулнăран пушар тухас хăрушлăх та питĕ пысăк. Ҫавăнпа та ҫынсене, вĕсем пурăнакан вырăнсене, тĕрлĕ ҫыхăнăва ҫак хăрушлăхран хӳтĕлес ĕçе тĕрĕс йĕркелес тесе тĕрлĕ вăйсене пĕрлештерме хистет.

Пирĕн республика территорийĕнче, апла пулсан Муркаш районĕнче те, патшалăх автоинспекци уйрăмĕ пушар хуралçисемпе ҫыхăнса ĕçлеме йышăну турĕ. Ҫаплапа вара районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх ҫул-йĕр инспекцийĕн уйрăмĕ те вырăнти хăй тытăмлăх органĕн ҫынсене тата машинăсене вăрмана кĕме чарасси ҫинчен калакан распоряженийĕсене пурнăçлассипе тимлет. Вăрмансем ҫумĕнчи федераллă, республика пĕлтерĕшлĕ е вырăнти ҫулсене ҫирĕп контрольлесси паянхи куна тĕп задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Уйрăмах «Сăр – Шомик – Пошкар», «Гигант», «Муркаш – Турай» автоҫулсем тата Малиновка лесничестви ҫумĕпе иртекен ҫулсем ҫинче патруль служби ĕçне вăйлатни те ҫакăнпа ҫыхăннă.

Ҫынсене тимлĕ пулма ыйтнипе пĕрлех хăрушлăх тухсан районти шалти ĕçсен пайне 8(83541) 62-6-67 номерпе, пушар хуралне 01 е 62-1-72, 62-7-37, 62-6-82 номерсемпе шăнкăравласа пĕлтерме ыйтатпăр.

**В. ВОЛКОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн ГИБДД уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

Симĕс ĕç- çи

## Ҫуллахи кун хĕле тăрантарать

Шăрăх ҫанталăка пăхмасăрах ял ҫынни хĕлле валли выльăх апачĕ хатĕрлет.

Ĕнерхи кун тĕлне районта нумай ҫул ӳсекен курăксене 6370 гектар ҫинче ҫулнă. Ҫакă пĕтĕмĕшле палăртнин 65,8 процентĕпе танлашать. Пĕр ҫул ӳсекеннисене 493 гектар (39,0 процент) ҫинче, пĕрчĕллĕ культурăсене курăк тума 266 гектар ҫинче ҫулнă.

Тĕрлĕ хуҫалăхсем пурĕ пĕрле 4424 тонна (85,7 процент) утă, 6420 тонна (75,7 процент) сенаж тата 2370 тонна (19,4 процент) силос хатĕрленĕ.

Кĕскен

## Ҫут тĕнчене – апостолсен кунĕнче

Июлĕн 12-мĕшĕнче – Петрпа Павел апостолсен кунĕнче – Тури Панкли ялĕнче пурăнакан Людмила Алексеевнăпа Иван Валентинович Потаповсен ҫемйинче ывăл ҫуралнă. Ăна вара «шăпа леккипе» Петр ят хунă.

Ашшĕпе амăшĕ тата тăвататă пиччĕшĕ – акă ҫут тĕнчене тин ҫеç килнĕ арçын ачан пуянлăхĕ. Вăл ҫурални вара ашшĕ-амăшне амăш (ҫемье) капиталĕн хуçисем туса хучĕ. Ҫемье аталанăвĕнче ку пысăк пулăшу, паллах. Анчах та пĕчĕк пепке тата ҫемьери ытти ачисем те ҫирĕп сывлăхлă пулни – нимĕнпе танлашайми пуянлăх.

Йыхрав

## Черетлĕ 42-мĕш лару

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн июлĕн 8-мĕшĕнчи 43 № хушăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 42-мĕш ларăвне июлĕн 16-мĕшĕнче райадминистрацин ларусен залĕнче 10 сехетре пухаççĕ.

Кун йĕркине кĕртме ҫак ыйтусене сĕннĕ: пиллĕкмĕш созыври депутатсен районти Пухăвĕн суйлавне палăртасси ҫинчен; районăн 2010 ҫулхи 1 ҫур ҫулти экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕ ҫинчен, районăн 2010 ҫулхи 1 ҫур ҫулти бюджетне пурнăçлани ҫинчен; районăн 2010 ҫулхи бюджетне улшăнусем кĕртесси ҫинчен; энергие перекетлес тата энергетика эффективлăхне ӳстерес 2010 – 2015 ҫулсенчи тата 2020 ҫулччenхи тапхăрти муниципаллă программа ҫинчен; 2007 – 2011 ҫулсенче хуҫалăхăн пĕчĕк формисене аталантарасси ҫинчен калакан программăна пурнăçлани ҫинчен; ҫамрăксем ҫинчен калакан 2011 – 2020 ҫулсенчи тĕллевлĕ программа ҫинчен тата ытти те.

Ларăва ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, предприятисен, организацисен, учреждениcен ертӳçисене тата райадминистрацин яваплă ĕçченĕсене чĕнеççĕ.

Саламлатпăр



Чи юратнă ҫыннăмăра – Мăн Шашкар ялĕнче пурăнакан **Галина Михайловна КОРНЕЕВĂНА** 50 ҫулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн, ачисемшĕн, питĕ пысăк телей. Эпир сана юратпăр. Яланах пире ăс парса пулăшса пыратăн, йывăрлăхсене ҫĕнтерсе малалла пурăнма вăй-хал парса тăратăн. Сывлăху сан ҫирĕп пултăр, кун-ҫулу вăрăм та телейлĕ килтĕр, сĕтелӳ ҫăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе пуян пултăр.

**Салампа: хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, Роман мăнукĕ, хăтипе тăхлачи, ҫывăх тăванĕсем.**

ҪЫРĂНТАРУ

**Хаклă вулакансем!**

**Райхаҫата августран илсе тăма ҫырăнтарас тапхăр пырать. Паян-ыранах почтальонсемпе тĕл пулма тăрăшăр!**

ГОСТ 530-2007
ПОЛНОТЕЛЫЙ КЕРАМИЧЕСКИЙ
КИРПИЧ
ЧЗСМ
ВОЗМОЖНА ДОСТАВКА
М-100....от 4,99 руб
М-125....от 5,20 руб
М-150....от 6,90 руб
акция действует с 01 по 31 июля 2010г. цены указаны за наличный расчет
ЧР г. Чебоксары, ул. К.Иванова 80А
тел: (8352) 58-35-13, 58-63-71, 58-35-05
www.21chzsm.ru chzsm@orionet.ru

*Вĕрентекен çулталăкне халалланă уйăхсерен тухса тăракан кăларăм.*

# Ялти учитель





*Авдеевсен династийĕн вĕрентӳ ĕçĕнчи пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ 532 çул.*

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

## Шкулти лагерьсенче – черетлĕ смена

***Малтанласа çуллахи каникул вăхăтĕнче районти шкулсем çумĕнче йĕркеленекен лагерьсем кăçал пĕр сменăпа çеç ĕçлессине планланă пулсан, çак кунсенче лагерьсенче черетлĕ смена уçасси пирки пĕлтерчĕç. Кун пирки тĕплĕнрех район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи З.Ю. ДИПЛОМАТОВА каласа пачĕ:***

– Чăнах та, малтанласа бюджетран укçа-тенкĕ çителĕклĕ уйăрма май килменнипе шкулсенче йĕркеленĕ лагерьсене пĕр сменăпа çеç ĕçлеттерме пулнăччĕ. Халĕ вара вырăнти бюджетран ачасен çуллахи канăвĕпе ĕçне йĕркелеме тепĕр 250000 тенкĕ уйăрма май тупăнчĕ. Çавăнпа та август уйăхĕнче шкулсем çумĕнчи лагерьсенче черетлĕ смена уçăлать.

**– Лагерьсем мĕнле енсемпе ĕçлĕç?**

– Августри сменăра профиль лагерĕсем пулĕç. Ачасем экологи, спорт, журналистика, туризм тата ытти енсемпе хăйсен тавра курăмне аталантарма пултарĕç. Анчах та лагерьсенче ачасен сывлăхне çирĕплетесси тĕп вырăнтах пулĕ.

**– Черетлĕ сменăра пурĕ миçе ачана активлă канупа тата ĕçпе тивĕçтерме май пулать?**

– Уйăрнă укçа-тенкĕ 595 ачана шкулсем çумĕнчи лагерьсене çӳреме май парать. Çапла вара кăçал та, пĕлтĕрхи пекех, районти шкулсенче вĕренекенсен 47 процентне канупа тата ĕçпе тивĕçтеретпĕр.

Хальхи вăхăтра хула тулашĕнчи лагерьсене кайма путевкăсем паратпăр. 1-2-мĕш сменăсенче çак лагерьсенче районти 160 ача канчĕ. Пĕтĕмпе вара 4 сменăра пурĕ 293 ача лагерьсенче пулĕ.

Шкулсем çумĕнчи опытлă участоксем çинче шкул ачисем халĕ биологи предмечĕпе пăхса хунă çуллахи ĕçсене пурнăçлаççĕ.

**– Районти вĕрентӳ учрежденийĕсенче юсав ĕçĕсем тата мĕнлерех сарăлнă? Ăчасем тирпей-илем кĕртессипе пулăшма пултараççĕ-и?**

– Районти пур вĕрентӳ учрежденийĕ та çитес вĕренӳ çулне хатĕрленет. Вĕсенче июнь уйăхĕнчен пуçласах юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Каламалла, ачасем шкул территорине тирпей-илем кĕртес ĕçсене пурнăçлама пултараççĕ.

Ĕçсем ытларах бюджет тулашĕнчи укçа-тенкĕпе пурнăçланаççĕ. Республикăри çивĕч ларутăрăва пула Çурлатринчи «Лебедушка» ача садне вăхăтлăх чарса лартма тиврĕ. Унта паянхи кун централизациленĕ майпа шыв пымасть. Отаркăри «Малыш» ача сачĕн çивиттине çĕнĕрен тăвасси вĕçленсе пырать. Мăн Хураçкари «Тюльпан» ача сачĕн пĕр стенине çĕнĕрен хăпартса юсанă, халĕ ĕçсем çивитти çинче пыраççĕ. Вырăнти бюджетран уйăрнă укçа-тенкĕпе «Золушка» ача садĕнче канализацие шыв пăрăхĕсене улăштаратпăр.

Кăçал районти икĕ шкул ял тăрăхĕсемпе пĕрле комплекслă строительство проекчĕсен конкурсне хутшăнать.

Йӳçкассинчи вăтам шкулта кивелнĕ чӳречесене çĕннисемпе ылмаштаратпăр, Çатракассинчи шкулăн çивиттине çĕнететпĕр: унăн тăрри икĕ хысаллă пулать.

Районти вĕрентӳ учрежденийĕсене ятарлă комисси августăн 3-6-мĕшĕсенче тĕрĕслет. Комисси йышĕнче Роспотребнадзорăн территори уйрăмĕнчи специалистсем, пушар хуралĕнчи ĕçченсем, вĕрентӳ пайĕн специалисчĕсем, ГО тата ЧС специалисчĕ, шалти ĕçсен пайĕн тата федераллă хăрушсăрлăх служби представителĕсем пулаççĕ. Августăн 15-мĕшĕ тĕлне пур вĕрентӳ учрежденийĕн те çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрри çинчен акт илмелле.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Çĕнĕ предмет пуриншĕн те усăллă

Иртнĕ вĕренӳ çулĕн тăваттăмĕш чĕрĕкĕнче Чуманкассинчи вăтам шкулта та тăваттăмĕш класс ачисене тĕн культурин никĕсĕсемпе чиркӳпе çыхăнман этика предметне вĕрентме тытăнтăмăр. Çак ятпа иртекен уроксене ирттерессине ашшĕ-амăшĕсемпе килĕшсе татăлнă хыççăн йĕркеленĕ.

Çĕнĕ предмета вĕренме кĕнекесем ачасем валли кăна мар, учительсем валли те пур, ашшĕ-амăшĕ валли те ятарлă брошюрăсем кăларнă. Çак предмет питĕ анлă содержаниллĕ. Ăна вĕреннĕ чухне ачасем Раççейри тĕрлĕ халăхăн традицийĕсемпе те паллашаççĕ, тĕнчере чи анлă сарăлнă тĕнсен пирĕн çĕр-шыври пĕрлешӳĕсем çинчен те пĕлеççĕ. Çавăн пекех чиркӳрен уйрăм этикăна та хăйсен шайĕнче интереслensех тĕпчеççĕ.

Тĕллевĕ вара çак çĕнĕ предметăн акă мĕнле: ĕмĕртен ĕмĕре куçса пынă хаклăлăхсемпе йăла-йĕркесене тĕпе хурса паянхи ачасен ăс-хакăлне аталантарасси, тĕрлĕ халăх çыннисене хисеплеме вĕрентесси.

Пĕр чĕрĕк çак предмета вĕрентнĕ май вăл ашшĕ-амăшĕсене те ачисене воспитани парассипе сахал мар пулăшни сисĕнчĕ. Килти ĕçсене пурнăçланă чух вара ачасен урокра вĕреннине çирĕплетнисĕр пуçне хăш-пĕр хурава ашшĕ-амăшĕпе е аслашшĕ-асламăшĕпе те хатĕрлеме тивет. Çакă аслисене те предметпа çывăхлатать, çав вăхăтрах тата ашшĕ-амăшне шкулпа та тачăрах çыхăнура пулма хистет. Апла çак предмета вĕренни ачасене хăйсен несĕлĕсене тĕпчесе вĕсен йăлийĕркине, пурнăçри хаклăлăхсене пĕлме ыйтать.

Тĕн культурипе çывăхрах паллашнă май шкул ачисен тавра курăмĕ те анлăланать. Вĕсен вара «ку мĕншĕн çапла, тепри мĕншĕн капла» текен ыйтусем çуралсах тăраççĕ. Çакă лайăх та. Уроксене ирттернĕ чух информаципе коммуникаци технологийĕсене вырăнлă усă курса ĕçлетпĕр. Урок çак формăпа иртнине ачасем те кăмăллаççĕ.

Хальлĕхе çак предмета Раççейри 19 регионта эксперимент мелĕпе ирттереççĕ. Анчах та ятарлă курсăн результачĕ лайăх пулсан 2012 çултанпа ăна шкул программине яланлăха кĕртмеллине палăртаççĕ. Çак интереслĕ предмет малашне «хăйĕн витĕр» кашни шкул ачине кăларасси вара пысăк иккĕленӳ çуратмасть.

**О. КОВАЛЕВА, Чуманкассинчи вăтам шкулти пуçламăш классен вĕрентекенĕ.**

## «Вĕрентекенĕн ят-сумĕ çĕкленмеллех»

***Вера Федоровна Ильина хальхи вăхăтра Ильинкăри вăтам шкул директорĕнче вăй хурать. 1967 çулта Вăл Шупашкарти И.Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика институтĕнчи физикăпа математика факультетне пĕтернĕ. Чăваш Республикин пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, РФ халăха çутта кăларас ĕçĕн отличникĕ, хастар педагог вăхăтра директорăн çумĕ пулса тăрăшнă. Ĕç стажĕ те унăн пысăк – 42 çул.***

***Паян вăл – редакци хăни.***

**– Вера Федоровна, Учитель çулталăкĕнче мĕн çĕннине пурнăçа кĕртме тата çак çулталăка учтельсене халаллани пирки мĕн шутлатăр?**

– Кăçалхи çул Учитель çулталăкĕ пулни мана питĕ савăнтарать. Кăçалхи çул компьютерсем туянтараççĕ пулĕ тесе шанас килет. Кашни учителĕн хăйĕн класĕнче компьютер пулать пулсан вăл çĕнĕлле ĕçлесе пыма тăрăшĕ, информаципе татах та тĕплĕнрех усă курĕ. Ман шутпа аслă класра вĕрентекен кашни учителĕн Интернетри информаципе усă курса ĕçлемелле. Ку çапла пуласса шанатăп та. Çĕнĕ технологисемпе усă курса ачасен ăс-тăнне пуянрах тăвасчĕ. Курссене вĕренме çӳрекен учительсене тăкаксем саплаштарсан та питĕ лайăх пулмалла.

Хамăр шкула илес пулсан çак çул хамăрăн ĕçчен учительсен галерейине тумалла. Материалсем пухма вара архива çӳрес тетпĕр. Ачасен сывлăхне çирĕплетес тесе çĕнĕ мероприятисем ĕç йĕркине кĕртесси пирки шутламалла. «Пирĕн çĕнĕ шкул» программа чылай çĕнĕлĕхе кĕртме май парать. Вĕрентӳ системи те улшăнсах пырать. Унăн çĕнĕлĕхĕсене тĕпчесе вĕрентсе пырас пулать.

Ку çула Учитель çулталăкĕ тесе палăртнă пулсан учительсен малашлăхĕ лайăх еннелле улшăнмалла пек. Вĕрентекенĕн ят-сумĕ çĕкленмеллех.

**– Мĕнле шутлатăр: ачасем пурнăçра хăйсен вырăнне тупассинче учитель мĕнле вырăн йышăнать?**

– Ман шутпа тĕрĕс çул суйласа илессинче учитель пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Ашшĕ-амăшĕ ачан шăпипе интересленмест пулсан вара – тĕп вырăн. Ума лартнă тĕллевсене пурнăçласа пырсан мĕн ĕмĕтленни çитсе пырать. Тата кăштах ăнăçу, телей тени пулмалла ĕнтĕ. Вĕрентекенĕн ачасем çине тĕрĕс витĕм кӳмелле.

**– Сирĕн шкул ашшĕ-амăшĕсемпе, общественноçпа мĕнле ĕçлесе пырать?**

– Шкул ашшĕ-амăшĕсемпе тачă çыхăнура. Ашшĕ-амăшĕсем шкула килсех тăраççĕ, учительсем те час-часах килсенче пулаççĕ. Нумай мероприятие пĕрле ирттеретпĕр. Ашшĕ-амăшĕсем уроксем итлеме те килеççĕ. Республика Президенчĕ каланине пурнăçа кĕртес тетпĕр: ашшĕ-амăшĕсене компьютерпа усă курма вĕрентесшĕн.

Ял пурнăçĕнче шкул уйрăм вырăн йышăнать. Мĕншĕн тесен пирĕн шкул район центрĕнчен питĕ инçетре вырнаçнă. Шкулта вырăнти спорт ваййисем, тĕрлĕ концертсем чылай иртеççĕ.

**– Ку таранччен сирĕн шкул тунă çитĕнӳсем мĕнлерех? Тĕллевсем тата?**

– Пĕрлехи патшалăх экзаменĕсен результачĕсем районта лайăххисен шутĕнче пулни хавхалантарать. Пирĕн учительсем республика, район шайĕнчи конкурссенче хăйсене аван кăтартаççĕ: Г.А. Анисова, Н.Л. Иванова, Е.З. Таймаскина, С.К. Ятреева... Олимпиадăсенче те призлă вырăнсем пулаççĕ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче кĕçĕн класра вĕренекенсен ăстăн ваййисенче пирĕн вĕренекенсем малти вырăнсене йышăнма пултарчĕç. Шел те, информатика учителĕ çук, çакă питĕ пăшăрхантарать. Малалла тĕллевсенчен пĕри вара – шкула спорт инвентарĕсемпе пуянлатасси.

**– Мĕнле шутлатăр, учитель паян учитель пулнипе пĕрлех тата кам?**

– Учитель шкул ачисемшĕн вĕрентекен çеç мар, психолог та, иккĕмĕш амăшĕ те, юлташ та, пурнăç çулĕ çине тухма пулăшакан та, професси суйласа илме пулăшакан та, çывăх çын та.

**– Паянхи учителе мĕн хумхантарать?**

Вĕрентекенĕн статусĕ. Ĕç укçи, сывлăха çирĕплетме кайма питĕ хаклă пулни. Санаторисене кайма путевка паманни. Шкул шăпи те шухăшлаттарать, ачасем сахалли те, ялта ĕç вырăнĕсем сукки те. Шкулсем хушшинче танмарлăх пурри: пĕрисене патшалăх пурăнма пулăшса пырать, теприсене пĕтме пулăшать. Чаплă та хитре шкулсем районта кирлĕ, паллах. Анчах та кашни ачан çакăн пек шкулта вĕренес килет вĕт. Учитель çулталăкĕнче пирĕн шкулти кабинетсем те çĕнĕ оборудованиллĕ пуласса шанатăп.

**Л. ТУКТИНА.**

## Учитель пек пуласчĕ

Пире Лидия Аркадьевна Ядыкова вĕрентет. Вăл яланах хăйне сăпайлă тытать. Пирĕнпе вылять, кулать, кирлĕ чухне вара çирĕп ыйтать. Унпа вĕренме питĕ интереслĕ. Вăл усă урокcем, класс тулашĕнчи мероприятисем ирттерет, унăн хăш-пĕр ĕçĕсем журналсенче те пичетленнĕ.

Пире Лидия Аркадьевна тĕрлĕ тĕпчев ĕçне тума хăнăхтарать. Хамăр тĕпченĕ, çырса хатĕрленĕ ĕçсене эпир малтан класра хӳтĕлетпĕр, кайран вара – шкул шайĕнче.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Лидия Аркадьевна ертсе тата пулăшса пынипе эпир нумай конкурса хутшăнтăмăр. Районта виççĕмĕш класра вĕренекенсем хушшинче ăс-тăна тĕрĕслемелли вăйă пулчĕ. Унта эпĕ чăваш чĕлхипе 1-мĕш вырăна тухма пултартăм. Район шайĕнче Çĕнĕ çул ячĕпе ирттернĕ конкурсра пирĕн класс «тĕлĕнтермĕш çăмата» хатĕрлесе мала тухрĕ.

«Эпĕ – тĕпчевçĕ» Раççей конкурсĕн районти тапхăрне «Янтарь çынна пулăшать-и?» ĕçпе хутшăнтăм. Лидия Аркадьевна нумай пулăшрĕ мана. Ĕçе 2-мĕш вырăн парса хакларĕç. Янтарь пур чиртен те, усал-тĕселрен те пулăшать иккен. Манăн халĕ çак чултан хатĕрленĕ шăрça та пур. Класс ертӳçи вăрçă паттăрĕсем çинчен ĕç хатĕрлеме те пулăшрĕ. Ăна та лайăхха асăнчĕç.

Тăрăшсан пĕтĕмпех пулать иккен. Çавăнпа эпĕ те, класри ытти ачасем те хамăрăн вĕрентекен пек пултарулла пуласшăн.

**Кристина КРАСНОВА.** Ярапайкассинчи вăтам шкул, 2 класс.

# Тав çырăвĕ тата хаклă парне

**Ĕç сыхлавĕ**

***Çулленех районта ĕç сыхлавĕ енĕпе чи лайăх специалиста палăртассипе конкурс ирттереççĕ. «Ĕç сыхлавĕ енĕпе Муркаш районĕнчи чи лайăх специалист» ята тивĕçнĕ çын вара республикăри професси ăсталăхĕн конкурсне хутшăнать. Кăçал кун пек чыса Валерий Ильич Павлов тивĕçрĕ.***



Вăл – Чăвашпотребсоюзăн Муркаш районĕнчи потребительсен обществин ĕç сыхлавĕ енĕпе ĕçлекен инженерĕ. Ĕç сыхлавĕ енĕпе унăн ĕç стажĕ 10 çулпа танлашать. Асăннă предприятире 2 çул ĕçлет. Вăл – РСФСР ял хуçалăх ĕçченĕсен социализмла ăмăртăвĕн отличникĕ, ăна район администрацийĕн пуçлăхĕн Хисеп грамотипе наградăланă. Вăл организацире ĕçленипе Муркаш райповĕ Чăвашпотребсоюз ĕç сыхлавĕ, производство санитарийĕ тата производство культури енĕпе ирттерекен смотр-конкурс итогĕсемпе призлă вырăн йышăнма пултарнă.

Предприятисенче ĕç вырăнĕсене ĕç условийĕсене кура аттестациленĕ. Ĕç сыхлавĕн кабинетне йĕркеленĕ. Вăл хальхи хăрушсăрлăх ыйтăвĕсене тивĕçтерет. Ĕç хăрушсăрлăхĕ енĕпе стуктура подразделенийĕн ертўçисене тата ĕç сыхлавĕн комиссийĕн членĕсене 40 сехетлĕ программăпа, ĕçлекенсене 15 сехетлĕ программăпа вĕрентнĕ. Организацире ĕç сыхлавне епле пăхăннине 3 сыпăклă майпа тĕрĕслессине йĕркеленĕ. Çапла вара предприятисенче юлашки çулсенче производствăра инкексем пачах пулман.

Нумаях пулмасть ĕç сыхлавĕ енĕпе республикăри конкурса хутшăнса Валерий Ильич Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин Тав çырăвне тата хаклă парнене тивĕçрĕ.

**А. КУЗЬМИН,**
**ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хўтлĕх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

# Çынсен культура пулмаллах

**Тасалăхпа тирпейлĕхшĕн**

***Паянхи манăн сăмахăм çынсем хăйсене хисеплеме пĕлни, вĕсен культури пирки. Кулленхи пурнăç условийĕсем кунсерен тенĕ пекех лайăхланса пыраççĕ пулин те, хальлĕхе вара вĕсен культура шайĕ çитсех кайманнине курма пулать.***

Акă пирĕн пахча хыçĕнче пысăках мар тип çырма пур. Эпĕ ача чухне тата шкулта вĕреннĕ çулсенче те кунта ачасен чупмалли-вылямалли, канмалли вырăнĕ пулнă. Ялан унта ачасен шавĕ тăнă. Кунтанах Чапаев урамĕнчен пирĕн енне выльăхсене кĕтме хăваласа каятчĕç. Кунти вырăн тасаччĕ, курăк кăна ўсетчĕ унта. Нимĕнле кирлĕ мар çўп-çап та пулман.

Халĕ вара çак тип вара çўп-çап килсе тăкмалли вырăн туса хунă. Мĕн кăна çук пулĕ унта: тимĕр-тăмăрĕ те, кантăк ванчăкĕсем те, пластик кĕленчесем те.

Çавна калаласа хăвараспăн. Таçтан аякран килсе тăкнă каяш мар кунта. Çакăнта вырăнта пурăнакансемех çак тасамарлăха тăвакансем. Хăйсем хăтлă костюмсемпе çўреççĕ, хаклă эрехсем, тĕрлĕрен сĕткенсемпе шывсем ĕçеççĕ, пуш кĕленчисемпе пакечĕсене вара кунта килсе йăвантараççĕ. Совеç тени пур-ши вара кун пек çынсен?

Çак йĕркесĕрлĕхе чарас тесе иртнĕ çул кунта хăма çине «Çўп-çап тăкмалла мар!» тесе çырнине вырнаçтартăм. Тепĕртакран вара çак хăма таткине вистесе илсе пирĕн пахчана вăркăнтарса хăварнă. Вăт мĕн патне çитсе тухрăмăр капла.

Çавна май Чăваш Республикин Президенчĕ республика Патшалăх Канашне янă Çырури сăмахсем аса килеççĕ. Вăл тĕрĕсех палăртать, пирĕн урамсене тата ялсене таса тытса тăма пысăк укçа-тенкĕ кирлĕ мар. Культура шайне ўстерес пулать.

Паллă ĕнтĕ, вăхăт ĕлĕкхи мар. Халĕ çынсем тĕрлĕрен продуктсемпе, хатĕрсемпе, таварсемпе ытларах та ытларах усă кураççĕ. Анчах та çакă вăл çўп-çап айне пулмалла тенине пĕлтермест вĕт-ха. Урамсенче çўп-çап пухмалли контейнерсем вырнаçтарма тытăнас пулать. Кунсăр пуçне тата йăлара пухăнакан каяшсене сортламасăр та май çук. Кантăк таврашне, тимĕр-тăмăрне, хутне, пластмассине уйрăм сортласа пухмалла.

Теприсем çак сăмахсем хыççăн: «Кун пекки вăл хăçан пулĕ-ши?»– тесе калама та пултарĕç. Анчах та çак ĕçе хăçан та пулин тытăнасах пулать вĕт-ха. Мĕн чухлĕ маларах тытăнатпăр, çавăн чухлĕ лайăхрах кăна.

Çавна та асăнса хăварас тетĕп. Пластмассăна çунтарма юрамасть. Пĕрремĕшĕнчен сывлăш вараланать, тепĕр енчен тата пухăннă кĕле çынсем пĕлнĕ-пĕлменнипе çĕре сапаççĕ, тăпраран вăл шыва, ўсен-тăрана, выльăхсене лекет. Кайран хамăр ку е вăл чирчĕр ăçтан тупăннинчен тĕлĕнетпĕр.

Тĕрĕссипе цивилизаци çитнĕ ялсенче çўп-çап пуçтарассине йĕркелемен мар. Нимĕнле кăткăслăх та çук. Палăртнă вăхăтра вырăна çўп-çап пухакан автомашина килет. Çынсем хăйсен çўп-çапне автомашина çине тиеме витресемпе илсе тухаççĕ. Пулĕ-ши пирĕн патра та çакăн пекки?

**В. МАСТЕРОВ.**
**ĕç тата вăрçă ветеранĕ.**
Муркаш ялĕ.

# Хамăрăнах тăрăшмалла

**Тирпей-илемшĕн**

Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Кашмашпа Хуракасси выççăлкки ялĕсем хушшинче пысăк плотина сарăлса выртать. Унăн çумĕнчех вара пĕчĕк вăрман тăрăхĕ кашласа ларать. Кăçалхи шăрăх кунсенче çак плотина нумай çынна савăнтарать. Шыв хĕрринче канма Кашмаш тата Хуракасси выççăлкки ялĕсенчен кăна мар, ытти ялсенчен те килсе çўреççĕ.

Анчах та нумайăшĕ тирпейлĕх пирки манса каять. Çывăхри вăрман тăрăхне тĕрлĕрен çўп-çаппа тултараççĕ.

Çавăнпа та утă уйăхĕн 10-мĕшĕнче Кашмаш тата Хуракасси выççăлкки ялĕсенче пурăнакансем 50 çынна яхăн плотина йĕри-таврашне йĕркене кĕртессипе ĕçлеме тухрĕç.

Уйрăмах Андрейпа Сергей Алжировсене, Охотниковсен, Щукинсен, Семеновсен, Нодыковсен, Федоровсен, Савельевсен, Быковсен çемйисене ырăпа асăнмалла. Çамрăксенчен Алексей Арапкин, Александр Ефремов, Владимир Нодыков пултаруллă пулчĕç.

Плотина хĕрне канма килекенсене вара пурне те çапла ыйтса калатпăр: тархасшăн çак илемлĕ вырăна çўп-çап пăрахса ан хăварăр, хăвăр хыççăн пуçтарма тăрăшăр.

**О. СЕМЕНОВА,**
**Кашмаш ялĕнчи библиотека библиотекарĕ.**




В 2010 г. специализированный журнал для бухгалтеров "Главная книга" отмечает свой 10-летний юбилей. Два раза в месяц читатели журнала получают все свежие и интересные профессиональные новости, практические комментарии к изменениям законодательства, касающимся работы бухгалтера.

Некоторые итоги 10-летия:

- журнал "Главная книга" занимает одну из ведущих позиций на рынке бухгалтерской прессы. Тираж одного номера сегодня превышает 50 тысяч экземпляров;
- вышло более 240 номеров. Подготовлено несколько специальных выпусков журнала для проводимых Сетью КонсультантПлюс ежегодных Программ поддержки бухгалтера (тиражи одного спецвыпуска, распространяемого в ходе акции, составляют более 500 000 экземпляров);
- журнал можно назвать настольной книгой бухгалтера - у него появилось множество постоянных читателей и подписчиков.

Читатели "Главной книги" ценят журнал за то, что в нем много практической информации по вопросам, которые больше всего волнуют специалистов. Информация излагается просто, доступно, приводятся наглядные примеры с расчетами, бухгалтерскими проводками, образцами заполнения документов, всегда даны точные реквизиты документов, на которые ссылаются авторы.

В журнале представлена информация трех типов:

- новости (последние изменения в законодательстве и пояснения к ним, краткие сводки основных событий в сфере экономики);
- практические рекомендации (статьи и обзоры с рекомендациями, примерами, анализ последних изменений, типичных ошибок, ответы на часто задаваемые вопросы, анализ судебной практики по применению налогового законодательства и многое другое);
- прогнозы (комментарии и разъяснения планов законодателей).

Спорные вопросы комментируют не только эксперты издательства, но и официальные представители контролирующих органов: Минфина России, ФНС России, Минздравсоцразвития, Минтруда России и др. В журнале читателям предлагаются готовые варианты действий с подробными объяснениями того, какой из вариантов является более выгодным, какой - безопасным, а какой - менее трудозатратным.

Высокое качество журнала "Главная книга" подтверждено надежностью источников информации - это госорганы, в том числе Минфин России, ФНС России, Минтруд России и др., и профессиональные эксперты. Авторами материалов в журнале выступают специалисты с большим опытом практической работы в области налогообложения, бухучета и права.

"Главная книга" - надежный помощник бухгалтера, - говорит постоянная читательница журнала. - С ним все становится на свои места! Я уговорила подписаться на него многих коллег, ведь практически на все вопросы, с которыми они ко мне обращались, я находила ответы в журнале. "Главная книга" для меня - настольная книга!"

Более подробную информацию о журнале "Главная книга" и о том, как подписаться на издание по льготным условиям, можно узнать по адресу:

**г. Чебоксары, ул. Нижегородская, д.4**
**или по телефонам: 8 (8352) 62-35-15, 62-10-83,**
**«горячая линия» 40-66-07, 40-66-08;**

# Отчетсене вăхăтра тăратмалла

**Пенси ыйтăвĕсемпе**

Июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕç паракансем 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулшăн Пенси фондне отчетсем тăратма тивĕç. Кăçалтан пуçласа çынсен ĕç стажĕ, ĕç укçи виçи, обязательнăй пенси тата медицина страхованийĕн взносĕсене куçарни пирки уйрăм çынсен сведенийĕсене пĕр тапхăрпа йышăнаççĕ.

Унччен ĕç паракансем Пенси фондне ĕçлекенсен страхланă стажĕ, вĕсен страховани взносĕ мĕн чухлĕ тўлемелли тата тўлени пирки сведенисем çулталăкра пĕр хут тăратнă. Çапла вара 2009 çулшăн сведенисене 2010 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен йышăннă. Кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вара харпăр хăйсен сведенийĕсене 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулшăн йышăнма пуçăнтăмăр. Çакă вăл ĕç пенсийĕсен виçисене палăртнă тата çĕнĕрен шутласа панă чухне кирлĕ даннăйсем май пулассипе, кунпа пĕрлех кĕске вăхăтрах пенси валли пухăннă суммăна гражданин палăртнă ертсе пыркан компанийĕ е патшалăхăн шутланман пенси фончĕ çине куçарассипе çыхăннă.

2011 çултан тытăнса Пенси фончĕ харпăр хăйсен сведенийĕсене кашни кварталта йышăнма тытăнать. Çакă вăл çынсен пенси прависем пирки сведенисене тăватă хут хăвăртрах татса пама май парĕ. Çапла вара обязательнăй пенси, обязательнăй медицина страхованийĕсен страховани взносĕсем пирки те сведенисене тăратасси улшăнĕ.

Обязательнăй пенси тата обязательнăй медицина страхованийĕсем çине страховани взносĕсем йышăнассине Пенси фончĕ 2010 çултан пуçласа тытăнчĕ. Унччен ĕç паракансем расчетсене налук органĕсене панă. 2010 çулхи пĕрремĕш квартал итогĕсемпе расчетсене йышăнасси япăх мар иртрĕ. Камеральнăй тĕрĕслевсемпе йĕркене пăснă пысăк тĕслĕхсене тупса палăртман. Ĕç паракансенчен 214 çынна 777 пин тенкĕ ытла штрафланă. Вĕсем отчетсем тăратмалли сроксене пăснă.

Ĕç паракансенчен 36 процентĕ тĕлĕшпе ларутăру çăмăл мар. Вĕсем страховани взносĕсене пачах та куçарса паман. Ĕç паракансенчен налук тўлессипе çăмăллăхсемпе усă куракан 10 пин çын ытла хăйсен налук статусне тивĕçтерессипе йывăрлăхсем тўснĕ. Июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулшăн обязательнăй пенси тата обязательнăй медицина страхованийĕсем енĕпе страховани взносĕсем тĕлĕшпе расчетсем йышăнма тытăннă.

Страховани взносĕсем пирки харпăр хăйсен сведенийĕсене тата расчетсене августăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр тăратмалла. Черетсем ан пулччăр тесе отчетсене организацисенчен графикпа килĕшўллĕн йышăнаççĕ. Отчетсене çавăн пекех электронлă майпа Интернет урлă та тăратма пулать. Çакă ĕç вăхăчĕпе туллинрех усă курма тата пурлăх тĕлĕшĕнчи тăкаксене чакарма май парĕ. Сăмах май, отчет докуменчĕсене организацисен 75 процентĕ унччен Интернет урлă тăратнă.

Саккунпа килĕшўллĕн енчен те организацире 100 çын ытла ĕçлет пулсан, отчетсене Интернет урлă тăратмалла. 2011 çултан çак правило 50 çын ытла ĕçлекен коллективсене те пырса тивет.

**Е. АЛЕКСАНДРОВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн ертўçи.**

Ыйту – хурав

## Анне субсидие тивĕçет-ши?

***Манăн аттепе анне те вăрçă участникĕсем. Çамрăк чухне вĕсем ялта пÿрт лартнă. Атте çĕре кĕнĕ, анне вара 89 çулта. Вăл пĕчченех пурăнать. Пÿрт кивелнĕ ĕнтĕ, унта юсав ĕçĕсем кирлĕ. Анне çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма субсидие тивĕçет-ши?***

*К. ПЕТРОВА.*

Раççей Федерацийĕн çурт-йĕр кодексĕн 51 статйинче çырса панă тăрăх граждансем социаллă найм килĕшĕвĕпе пурăнмалли çурт-йĕр требованийĕсене тивĕçтермен пÿлĕмре е çурт пурăнни вĕсене çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма ыйтакансен шутне кĕме ирĕк парать.

Раççей Федерацийĕн 2006 çулхи январĕн 28-мĕшĕнчи 47 № постановленийĕпе килĕшÿллĕн пурăнмалли пÿлĕм е çурт пурăнмалли условисене еплерех тивĕçтернине ведомствăсем хушшинчи комисси тĕрĕслет. Вырăнти хăйтытăмлăх органĕ муниципаллă çурт-йĕр фончĕн пÿлĕмĕсемпе çурчĕсене тĕрĕслесе хаклама çирĕплетнĕ йĕркене пăхăнса комисси туса хурать. Комисси йышне вырăнти хăйтытăмлăх органĕн представителĕсене те кĕртеççĕ. Çак комисси пÿлĕмре е çуртра пурăнмалли условисене хаклатăр тесен вырăнти хăй тытăмлăх органĕнче ыйтмалла.

## Хăтлă çурта куçма май пур-и?

***Анне 80 çулта, вăрçă участникĕн тăлăх арăмĕ. Уйрăм çуртра пĕччен пурăнать. Хăтлă кил-çуртпа тивĕçтерме пултараççĕ-иăна?***

*С. КАЗАКОВА.*

Раççей Федерацийĕн 2006 çулхи январĕн 28-мĕшĕнчи 47 № постановленийĕпе пурăнмалли çуртйĕрте инженери системи пулмалла: электричество, газ, шыв кĕмелле, ăна хуçалăхра усă курма, ĕçме май пултăр, вĕри шыв та, хутса ăшăтмалли системăпа вентиляци те. Централизациллĕ инженери системисĕр пурăнмалли 1-2 хутлă çуртсенче шыв пăрăхĕ пулмасан та пултарать, туалет та урамра пулма пултарать.

Хăтлă çурт-йĕре тивĕçессипе вырăнти хăй тытăмлăх органне пырса çуртра пурăнма условисем çителĕксĕр пулнине хакласа пĕлме ыйтмалла.

**Э. СОКРАШКИН,**
**прокурора пулăшаканĕ, 3 класлă юрист.**

Килти хушма хуçалăх

## Сывлăхпа продуктивлăх – чĕрнере

Майракаллă шултра выльăхăн сывлăхĕпе продуктивлăхĕ вĕсен чĕрнисенчен те килет.

Майракаллă шултра вылăхăн уйăх хушшинче чĕрнесем 6-8 мм таран ÿсеççĕ. Улăх-çарана тухнă вăхăтра вара вăл вылăх утнипе сăтăрăнса пĕтет, чĕрне форми улшăнмасть. Хĕлле вара вылăх ытлашши утманран чĕрне ÿсет, анчах та сăтăрăнса пĕтме пултараймасть. Çавăнпа та чĕрнесен форми улшăнать. Ӳснĕ чĕрне вара хуçălса, çуркаланса пĕтме, чĕрне çумĕнчи çемçе ÿте те суранлатма пултарать. Çапла вара ĕне, сăмахран, аран та йывăррăн утма е уксахлама тытăнать. Суранланнă вырăн шыçасси те пулать. Ĕне япăх çиет, ытларах выртать, сĕт те чакать. Тепĕр чух вара чирлĕ ĕне сĕт пачах та антармасть. Çавăнпа та çулталăкра икĕ хут ятарлă профилактика ĕçĕсене пурнăçламалла. Çуркунне вылăха улăх-çарана кăларас умĕн тата кĕркунне витене хупас тапхăр умĕн вылăхăн чĕрнисене касмалла.

Районти вылăх чирĕсене хирĕç кĕрешекен станци специалисчĕсен ушкăнĕ июнь уйăхĕнчен пуçласа шăпах çак ĕçе пурнăçлать. Специалистсем ятарлă курссенче пĕлĕве ÿстернĕ. Ĕçе пурнăçлама куçарса çÿремелли фиксаци станокне те туяннă. Çак ушкăн «Восток» тата «Оринино» хуçалăхсенчи майракаллă шултра вылăхăн чĕрнисене касассипе ĕçлерĕ. Районти ытти хуçалăхсенче те вăл çак ĕçе пурнăçлĕ.

**А. ФЕДОРОВА,**
**ветврач.**

## Ĕнесене – пан улми квасĕ

Пан улмипе груша тухăçлă пулнă çулсенче йывăççем айĕнче кавир пеке х выртаççĕ. Çакна курса вара хăш-пĕр пахчаçă йывăççен пĕр пайне шутламасăрах касса пăрахать. Ахалех.

Килте пурăнакан пур чĕр чун та пан улмие питĕ юратса çиет. Акă июль уйăх вĕçĕнчен пуçласа мĕн хĕл ларичченех хурсем вĕсемпе тăранса пурăнма пултараççĕ. Çапла вара пан улмипе курăк çисех хурсем питĕ аван ÿсеççĕ. Сыснасемпе вăкăрсем те пан улмие туххăмрах çисе яраççĕ, парса ĕлкĕр кăна. Какайĕ те тутлă пулать. Чăхсемпе индюксем те пан улми хушса хатĕрленĕ апата юратса çиеççĕ. Бройлерсем вара пан улмипе хăвăрт çитĕнеççĕ. Лаша та сĕтеклĕ пан улми çиме хирĕç мар. Анчах та вылăхăн уйрăмлăхĕсене шута илсе кашни чĕр чунах уйрăммăн çитермелле. Пан улмие тÿрех нумай мар, кунран куна ÿстерсе, курăкпа е утăпа хутăштарса памалла.

Ĕнесем сĕт ытларах антарччăр тесен вара вĕсене пан улми квасĕ хатĕрлесе пама пулать. Икĕ-виçĕ витре пан улми çине вĕрекен шыв ямалла, çак хутăша вĕретме кĕртмелле. Çăнăх хушса ăшă вырăна лартмалла. Тепĕр талăкран çак хутăш йÿçме тытăнать. Унта тăвар хушăр та – апат хатĕр. Ĕне те, вăкăр та çак апатран пăрăнмĕ.

**Ф. ЯРАНСКИЙ.**
Ярославка ялĕ.

Спорт

## Раççейре – малта

Июлĕн 6-8-мĕшĕсенче Пенза хулинче çăмăл атлетика енĕпе Раççей ăмăртăвĕ иртнĕ. Унта пирĕн районти Вера Васильева (Сосновка ялĕ) та хутшăннă, 1993-1994 çулхи спортсменсем хушшинче 1 çухрăм çурă дистанцире чупса мала тухнă. Шăрăх çанталăк чăрмав кÿнĕ пулин те, Вера лайăх результат кăтартма пултарнă. Ăна малашне те ăнăçусем сунатпăр.

ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Кадастровым инженером ООО «Аршин» 429530 Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 5, телефон: 8(83541)63439. ОГРН: 1032136001413 в отношении земельного участка для садоводства, расположенного на территории Кадикасинского сельского поселения, садоводческое товарищество «Солнечный», участок 62.

Выполняются кадастровые работы по уточнению местоположения границы и площади земельного участка, находящегося в собственности за Косолаповой Лаидой Григорьевной. Заказчиком кадастровых работ является Косолапова Лаида Григорьевна.

Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границы состоится по адресу: Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 5 30 июля в 10 часов 00 минут.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д. 5. Межевой организации ООО «Аршин».

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с 14 июля 2010 г. по 14 августа 2010 г. по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д. 5.

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: земли Косолаповой Лаиды Григорьевны читать ниже.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.

1. Винокуров Юрий Николаевич 2. Кеминев Виктор Федорович 3. Председатель с.т. «Солнечный» Смирнов В.А.

* * *

Администрация Моргаушского района в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 10 июля 2010 года за № 53 (7794) опубликовала сообщение о проведении аукциона на право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района, с подлежащей приватизацией в 2010 году, с одновременной приватизацией земельного участка на котором оно расположено.

В связи с допущенной ошибкой вместо «Срок подачи заявок - с 10.06.2010 года по 10.07. 2010 года» следует читать «Срок подачи заявок - с 10.07.2010 года по 10.08 2010 года».

Вулакан пултарулăхĕ

## Çÿп-çап айне пулатпăр

Пирĕн ялти Кулине
Пит тирпейлĕ пурăнать,
Кил хушшинчи çÿп-çапне
Кунĕн-çĕрĕн пуçтарать.
Карçинккана тултарать,
Каллĕ-маллĕ пăхкалать,
Улича хыçне кайса
Пăрахать те хăварать.
Пирĕн ялти юн-кĕрĕм
Питĕ туслă пурăнать.
Туслăха çирĕплетме
Кÿл хĕрне пуçтарăнать.
«Шапа ĕçки» пĕтсессĕн
Вăшт кăна çухалаççĕ,
Хăйсен хыçри каяшне
Çавăнтах хăвараççĕ.
Шухăшлăр-ха, тăвансем,
Мĕн патне çывхаратпăр.
Кун пек «ырлăх» пурнăçпа
Çÿп-çап айнех пулатпăр.
Çут çанталăк тумĕпе
Киленме юрататпăр,
Анчах çак илемлĕхе
Упрамашкăн манатпăр.
Ĕлĕк-авалтан çынсен
Таса вырăн – вăр пулнă.
Пуринчен те тасарах
Юхса выртан шыв пулнă.
Халĕ шыва кĕмешкĕн
Атă тăхăнас пулать.
Çерем тăрăх çаруран
Чупмашкăн манас пулать.
Тĕлсĕр çÿп-çап купипе
Çырмасем тулса ларнă.
Çав çÿп-çапа пăхнипе
Чунсем мăкланса ларнă.
Хамăр сăмсаран малти
Пуласлăха курасчĕ,
Хамăр хыççăн таса ят,
Таса Çĕр хăварасчĕ.

**Шурча Витали.**
**2010 ç.**

Коллектив Управления Пенсионного фонда РФ в Моргаушском районе Чувашской Республики выражает глубокое соболезнование специалисту Каликовой Т.Г., ее родным и близким в связи с невосполнимой утратой - смертью отца
**ФЕДОТОВА**
**Геннадия Андреевича.**

Коллектив Управления Пенсионного фонда РФ в Моргаушском районе Чувашской Республики выражает глубокое соболезнование специалисту Ивановой Н.П., ее родным и близким по поводу безвременной кончины брата
**АФАНАСЬЕВА**
**Василия Петровича**

Муркашри сĕт завочĕн коллективĕ кунта нумай çул оператора ĕçленĕ
**Иван Петрович**
**БЫКОВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**Архитектурно-строительное проектирование, систем электро-, водо-, газоснабжения. Составление смет. Свид. СРО.**
***ООО «Интертехсервис». Моргауши, ул. Мира, 9. Тел.: 62-6-03, 8-903-345-75-76.***

**Бетон, раствор любых марок. Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ, асфальт. Организация доставки. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-66-88-778, 8-927-668-84-40. 36-38.**

* * *

**Сентябрь уйăхĕнче иккĕмĕш пăруламалли шурă-хура ĕне сутатпăр. Тел.: 8-906-132-05-36.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.**

* * *

**ООО «Энергосервис» срочно требуются: главный бухгалтер с опытом работы, водитель на ГАЗ-53, газоэлектросварщик, рабочие. Реализуем ж/б кольца для колодцев и выгребных ям, блоки к/б. Цены ниже рыночных. Тел.: 8(83541)60-2-39, 8-905-342-98-11. Администрация.**

* * *

**Продается двухкомнатная мебелированная квартира площадью 53 кв. м. в с. Б. Сундырь, ул. Советская, д. 11. Тел.: 8-927-855-96-36, 29-18-07. 5-5.**

* * *

**Предприятие продает щебень фр. 40-70 М 1000 и песок строительный в любом количестве с Шешкарской пристани. Имеется возможность доставки до потребителя. Тел.: 8-927-669-26-10, 8-927-669-26-02. 2-8.**

* * *

**Моргаушская птицефабрика с 15 июля продает бройлерных цыплят в 15-дневном возрасте.**
**Тел.: 65-2-49, 65-2-48. 1-2.**

* * *

**Предприятию требуется электрик, опыт работы не менее 3 лет, условия и оплата труда при собеседовании. Тел.: 8-927-667-80-74. 1-2.**


* * *

**Уважаемые абоненты – потребители природного газа!**

Сообщаем Вам, что 27.11.2009 г. вступил в силу Федеральный закон от 23.11.2009 г. № 261-ФЗ «Об энергосбережении и повышении энергетической эффективности и о внесении изменений в отдельные законодательные акты Российской Федерации». В соответствии с пунктами 5, 6 статьи 13 данного Федерального закона собственники жилых домов (помещений в многоквартирном доме) обязаны в срок до 1 января 2012 года обеспечить установку и ввод в эксплуатацию индивидуального прибора учета расхода газа.

Для того, чтобы исполнить данное предложение, Вам необходимо согласовать заявление на установку прибора учета в абонентском пункте ООО «Чувашрегионгаз».

На основании пункта 10 статьи 13 вышеуказанного Федерального закона предоставляем Вам полученную из общедоступных источников информацию о возможных исполнителях услуг по оснащению приборами учета газа : ОАО «Чувашсетьгаз» (городские, районные и межрайонные подразделения); ООО "ГК Термотехника" ( г. Чебоксары, б-р Президентский,31).

Кроме того, в целях экономии природного газа и повышения энергетической эффективности его использования предлагаем Вам рассмотреть возможность замены устаревшего (выработавшего ресурс, с низким КПД) газопотребляющего оборудования (котлов, водогрейных колонок), экономно расходовать газ и использовать его по назначению (запрещается использовать газовые плиты для отопления помещения).

**ООО «Чувашрегионгаз».**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:270203:59, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:270203, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6401 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Участник долевой собственности Пихтеров Алексей Алексеевич, 28.03.1975 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Малые Татаркасы, ул. Центральная, д. 56, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования СХПК «Сундырский», участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:061901 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Большесундырского сельского поселения.**
**2. Пихтерову Алексею Алексеевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Малые Татаркасы, ул. Центральная, д. 56.**


* * *

**Участник долевой собственности Пихтеров Алексей Алексеевич, 28.03.1975 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Малые Татаркасы, ул. Центральная, д. 56, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования СХПК «Сундырский», участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:061901 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Большесундырского сельского поселения.**
**2. Пихтерову Алексею Алексеевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Малые Татаркасы, ул. Центральная, д. 56.**


* * *

**Участник долевой собственности Андреев Владимир Семенович, 01.11.1934 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, ул. Советская, д. 81, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ильинское, на территории землепользования СХПК «Волга», участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:030701 площадью 1,34 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Ильинского сельского поселения.**
**2. Андрееву Владимиру Семеновичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, ул. Советская, д. 81.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.**
**Пичете панă 13.07.2010 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3871.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.